Н.В. Никольский çуралнăранпа – 130 çул

«Хыпар» хаçат никĕслевçи

Майăн 19-мĕшĕнче паллă чăваш ученăйĕ, профессорĕ, чăвашсен пĕрремĕш хаçатне - «Хыпара» пуçарса яраканĕ Николай Васильевич Никольский çуралнăранпа 130 çул çитет.

Н.В. Никольский Муркаш районĕнчи Купăрля ялĕнче нумай ачаллă çемьере çуралса ўснĕ. Йывăр самана пулнине пăхмасăрах ашшĕ-амăшĕ тăрăшнипе вăл вĕренет. Малтанах Шăматри пуçламăш школа, кайран Шупашкарти тĕн училищине, хыççăн Хусанти тĕн академине пĕтерет. Часах вăл учитель ĕçне куçнă, Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарире историпе этнографи вĕрентме килĕшнĕ. Хусан университетĕнче, Çурçĕр-хĕвелтухăç археологи институтĕнче тата ытти вĕрентў заведенийĕсенче аслă должносри ĕçсене туса пынă.

1906-1917-мĕш çулсенче Н.В. Никольский чăвашла календарь - «Çулталăк кĕнеки» кăларса тăнă. Унта пурнăçри географипе, астрономипе, физикăпа тата химипе çыхăннă пулăмсене ăнлантарса панисем пулнă. Кунсăр пуçне унăн çĕр ĕçĕ, вылăхсем тата хурт-хăмăр ĕрчетесси пирки те, медицинăпа та пуян материалсем пичетленнĕ. 1910-мĕш çулта Н. Никольский хатĕрленĕ «Вырăсла-чăвашла словарь» кун çути курни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăмсенчен пĕри пулса тăнă.

Пурнăç тăршшĕпех Н.В. Никольский чăваш халăх историне тимлесех тĕпченĕ. Чăвашсен культури, халăхăн ĕçĕ-хĕлĕпе вĕрентĕвĕ пирки, йăлийĕркисем çинчен, çемье хуттăнăвăсем тата тĕн ыйтăвĕсемпе нумай ĕçсем çырнă. Вăл алăпа çырнă 250 томлă ĕç хатĕрлеме пултарнă. Эстони çĕршывĕн профессорĕ Вальтер Андерсон çакăн пирки акă мĕнле каланă: «Н.В. Никольский пухса йĕркеленĕ ĕçсем хăйне май архив пулса тăраççĕ. Чăвашсен фольклорĕпе, этнографийĕпе тата историйĕпе паллаштаракан материалсене чăннипех те питĕ пысăка хурса хакламалла. Н.В. Никольскийăн çыру ĕçĕсен пуххи чăвашсен чи хаклă мулĕсенчен пĕри пулмалла».

«Хыпар» хаçата никĕслени те пирĕн сумлă ентешĕн ячĕпе тачă çыхăннă. Вăл хаçатăн малтанхи 22 номерĕн редакторĕ тата кăларса тăраканĕ пулнă. Чăвашлăха малалла аталантарасси, чăваш чĕлхине упрасси, чăвашсен тин тухма пуçланă пĕртен-пĕр хаçатне анлăрах салатасси çинчен çырсах тăнă «Хыпарта».

1946-мĕш çулта Николай Васильевич «Чăваш халăхĕ Аслă Пăлхартан пуçласа Аслă революциччен» ятлă питĕ пысăк ĕçне вĕçлет. Унпа вăл истори наукисен докторĕн ятне тивĕçет.

Иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсенче ученăй «Чăвашсен ваттисен сăмахĕсем» ятлă пуххине йĕркелессипе ĕçлет. Кунта пурĕ 2217 чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахне пуçтарнă. Н. Никольский чăваш халăх юмахĕсене те пухса 1960-мĕш çулта кĕнеке кăларнă.

Н.В. Никольский 1961-мĕш çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче Хусанта çĕре кĕнĕ.

Çак улăп-профессорăн ĕçĕсем вара паянхи кун та хăйсен пĕлтерĕшне, пысăк хакне çухатман. Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров та ученăй ĕçĕ-хĕлне хак парса: «Республикăра пурăнакансен çакăн пек аслă çынсенчен тытăнса пымалла...» - тесе каланă.

Паянхи куна Чăваш Республикин Патшалăх пичет архивĕнче Н. Никольскийăн 19 кĕнеки, 100 ытла наука ĕçĕ тата ун çинчен калакан материалсем упраççĕ.

Н.М. САПОЖНИКОВА,
ЧР Патшалăх пичет архивĕн специалисчĕ.

Сăн ўкерчĕк каласа парать

Астăватăп-ха 1938 çулхи августăн 4-мĕшне. Эпĕ ун чух шкула кайман ача пулнă. Яла Н.В. Никольский килнĕччĕ. Эпир çемьепе пахчана тухрăмăр. Унта пĕр ўкерчĕк турăмăр.

Кайран каç енне лаç çумĕнче тепре сăн ўкерттертĕмĕр **(сăн ўкерчĕке пăхăр)**. Унта Николай Васильевичсăр пуçне нумай тăванĕсем тăчĕç. Унăн шăллĕсем: Пантелеймон (манăн атте), Илья, Виссарион, Зинаида йăмăкĕ, манăн мамак Ксения Лукинична, апи Евдокия Меркурьевна, Сергей Зосимович, Антонина Ефимовна (Зосим Васильевич Никольский арăмĕ), Василий, Афанасий, Александр, Юрий Ильинсем, Никит, Валерий, Николай, Люба, Лида Пантелеймоновсем, Вениамин, Вера Виссарионовсем, Мария Леонтьевна (Илья Дмитриевич арăмĕ), Евдокия Меркурьевна - ман апи, Анастасия Порфирьевна тата хамăр ял çыннисем, пускилсем: Николай Алексеев, Иван Афанасьев. Сăн ўкерчĕке Дмитрий Иванович Иванов (Зинаида Дмитриевнан упăшки) çаптарчĕ, негативран амбарта пичетлерĕ.

Халĕ те эпĕ, яла килсен, çуралнă килте кантăкран пăхатăп та пирĕн урампа анатран Н.В. Никольский хăпарнă пек туйăнать. Вăл хура костюмпа, шурă кĕпе çухавийĕ айĕнчен хура галстук курăнать. Юлашки çулсенче аллине туя тытатчĕ.

Н. ПАНТЕЛЕЙМОНОВ,
Никольский ашшĕн шăллĕн Дмитрий Никитичăн мăнукĕ.

К сведению вкладчиков Сбербанка

Сбербанк России продолжает выплату компенсаций по вкладам

С 16 апреля 2008 года подразделения Сбербанка России приступили к выплате компенсации по вкладам в соответствии с постановлением Правительства Российской Федерации. Выплата сумм компенсации производится в подразделениях Сбербанка России по месту нахождения вкладов. Для получения компенсации необходимо предъявить паспорт, сберегательные книжки по действующим счетам, а в случае получения компенсации умершего владельца вкладов, свидетельство о смерти и документ, предоставляющий право на наследство.

Постановление Правительства Российской Федерации от 29 декабря 2007 г. № 1002 «О порядке осуществления в 2008 году компенсационных выплат отдельным категориям граждан Российской Федерации по вкладам в Сберегательном банке Российской Федерации», принятое во исполнение статьи 19 Федерального закона от 24 июля 2007 г. № 198-ФЗ «О федеральном бюджете на 2008 год и на плановый период 2009 и 2010 годов», определяет порядок компенсационных выплат в 2008 году отдельным категориям граждан Российской Федерации по вкладам в Сбербанке России *по состоянию на 20 июня 1991 г.*, являющимся гарантированными сбережениями в соответствии с Федеральным законом от 10 мая 1995г. № 73-ФЗ «О восстановлении и защите сбережений граждан Российской Федерации».

Постановлением предоставлено право на получение ***компенсации и дополнительной компенсации в размере остатка вкладов*** гражданам Российской Федерации по 1954 год рождения включительно, инвалидам I группы либо инвалидам, имеющим III степень ограничения способности к трудовой деятельности, инвалидам II группы, родителям и опекунам (попечителям) детей-инвалидов и инвалидов с детства, родителям, сыновья которых проходили военную службу по призыву и погибли (умерли) в период прохождения службы в мирное время, а также по целевым вкладам на детей и вкладам на детей- сирот и детей, оставшихся без попечения родителей (в том числе наследникам, относящимся к указанным категориям граждан).

Указанным наследникам выплата компенсации и дополнительной компенсации осуществляется вне зависимости от возраста умершего владельца вкладов.

Размеры компенсации и дополнительной компенсации зависят от срока хранения вкладов и определяются с применением коэффициентов:

1 – по вкладам, действующим в настоящее время, а также по вкладам, действовавшим в 1992-2008 годах и закрытым в 1996-2008 годах;

0,9 – по вкладам, действовавшим в 1992-1994 годах и закрытым в 1995 году;

0,8 – по вкладам, действовавшим в 1992-1993 годах и закрытым в 1994 году;

0,7 – по вкладам, действовавшим в 1992 году и закрытым в 1993 году;

0,6 – по вкладам, закрытым в 1992 году.

Размер компенсации уменьшается на сумму ранее полученной предварительной компенсации по вкладам.

Размер дополнительной компенсации не уменьшается на сумму ранее полученной предварительной компенсации (компенсации) по вкладам.

Размер компенсации, выплачиваемой наследникам, имеющим право на ее получение, не уменьшается на сумму ранее полученной компенсации на оплату ритуальных услуг в размере до 6 тыс. рублей.

В случае смерти в 2001-2008 годах владельца вкладов, являвшегося на день смерти гражданином Российской Федерации, выплата ***компенсации на оплату ритуальных услуг*** осуществляется наследникам либо физическим лицам (до истечения 6 месяцев со дня открытия наследства), осуществившим оплату ритуальных услуг, в размере до 6 тыс. рублей. Данная компенсация выплачивается независимо от компенсаций, полученных владельцем вкладов при жизни.

Вклады граждан, по которым ранее были произведены начисления и выплата компенсации и дополнительной компенсации, не подлежат в 2008 году повторной компенсации и дополнительной компенсации.

Выплата сумм компенсации производится в учреждениях Сбербанка России по месту нахождения вкладов.

В прошедшем 2007 году учреждениями Сбербанка России на территории Чувашской Республики выплачено компенсаций на сумму более 246 млн. руб., а с начала компенсационных выплат, т.е. с 1996 года – свыше 1490 млн. руб. В 2008 г. на выплату компенсации в соответствии с законом будет выделено 56 млрд. руб.

Пресс-служба
Чувашского отделения
Сбербанка России.

Патриотизмла воспитани

Пакунлисем Муркаш шкулĕнче пулчĕç

Нумаях пулмасть Муркашри вăтам шкулта кунта тахçанах кĕтнĕ хăнасем пулчĕç. Аслă классенче вĕренекенсем умĕнче районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.Д. Макаров, Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕ А.Г. Прокопьев, Муркаш районĕнчи афганецсен пĕрлешĕвĕн ертўçи В.Е. Киршев тата Раççей Федерацийĕн шалти ĕçсен пайĕн çар командованийĕн управленийĕнчи А.Д. Иванов полковник тухса калаçрĕç.

Тăван çĕршыва юратасси, хисеплесси, ăна хўтĕлесси пирки шкулсенче яланах калаçççĕ. Ку хутĕнче вара çакăн пек чаплă, ĕçре сум илнĕ çар çыннисем шкула килни ачасенче Раççей çарĕшĕн мăнаçлăх туйăмне куç умĕнчех чĕртрĕ тесен те юрать. Тăватă хастар çар çынни кашниех хăйĕн ĕçне мĕншĕн суйласа илнине, ăна чунтан парăнса пурнăçланине тĕплĕн те питĕ интереслĕ каласа пачĕç. А.Д. Иванов вара Якаткассинчи сакăр çул вĕренмелли шкула пĕтерсен Муркашри вăтам шкулта ăс пухнă. Çавăнпа та хăй вĕреннĕ шкула вăл парне пама та кăмăл турĕ. Ăна кунти С.И.Карпова учитель ертсе пыракан çамрăк космонавтсен отрячĕ асăнмалăх кĕнекепе хăйсем ăсталанă «космонавта» парса чысларĕç. Парне тенĕрен, Е.Д. Макаров та Раççей Çарĕ çинчен пысăк кĕнеке парнелерĕ шкула. Каччăсем валли çак парне уйрăмах интереслĕ пулмалла.

Çакăн пек кăмăллă лару-тăрура ĕç-пуç Аслă çар училищисем çине те куçрĕ. Кăçалхи çул çакăн пек вĕрентў заведенийĕсене Муркаш шкулĕнчен вĕренсе пĕтерекен хĕрсем те кĕресшĕн. Пĕлтĕр те Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕ урлă çамрăксем çар училищисене вĕренме кĕнĕ. Республикăри ытти çар комиссариачĕсем хушшинче ку енĕпе малта пырать иккен пирĕн комиссариат. «Çултан-çул хăйсен пурнăçне çарпа çыхăнтарасшăннисем нумайланса пыни, паллах, савăнтарать», - тет çар комиссарĕ А.Г. Прокопьев.

Каччăсемпе хĕрсен тĕрлĕ вырăнти çар училищисене кĕме чăнах та халĕ майсем сахал мар, хăйсен тăрăшулăхĕпе хастарлăхĕ çеç кирлĕ. Çакнашкал тĕл пулусем вара вĕсене тата çирĕпрех пулма хистеççĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Районти прокуратурăра

Лицензисем илме «маннăшăн»

Раççей Федерацийĕн «Вĕрентў çинчен» саккунĕпе килĕшўллĕн вĕрентў ĕçне туса ирттерекен учрежденисем çакна валли лицензисем илме тивĕç. Прокуратура тĕрĕслевĕ вара хăш-пĕр çĕрте çак саккуна пăснă тĕслĕхсене тупса палăртрĕ. Кун пек çитменлĕхсем Сосновка шкулĕнче, Шуркассинчи пуçламăш шкул-ача садĕнче, «Буратино» ача садĕнче, «Радуга» пуçламăш вĕрентў учрежденийĕнче палăрчĕç. Унччен панă лицензисен вăхăчĕсем 2006–2007 çулсенчех тухнă.

Çакă вăл саккуна сĕмсĕррĕн пăсни пулать. Уншăн учреждени ĕçне-хĕлне чарса лартма та пултараççĕ. Административлă майпа правăна пăснăшăн асăннă учрежденисен ертўçисене 1000 тенкĕрен тытăнса 1500 тенкĕ таран штрафланă. Район пуçлăхĕ тата район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ патне асăннă çитменлĕхе пĕтерме кирли пирки представленисем тăратнă.

Е. ЕГОРОВ,
район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.

Граждансен пенси прависене хўтĕлесе

Район прокуратури районти организацисем пенси законодательствине мĕнле пурнăçланине тĕрĕслерĕ. Страхователсем Раççей Федерацийĕн Пенси фндне страховани взносĕсене вăхăтра туллин тўлесе тăма тивĕç. Организацисен хăш-пĕр ертўçисем саккун требованийĕсене йĕркеллĕ пурнăçлассишĕн тăрăшмаççĕ иккен. 36 организацин апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне страховани взносĕсем тўлессипе парăмсем пур. Паллă ĕнтĕ, çакă вăл граждансен пенси илессин прависене пăсни пулса тăрать. Ку организацисен ертўçисем тĕлĕшпе асăннă çитменлĕхсене пĕтерме кирли тата айăплисене дисциплина тĕлĕшпе ответ тыттарасси пирки район прокурорĕ представленисем тăратрĕ.

В. ЗАХАРОВ,
район прокурорĕн пулăшаканĕ.

Уголовнăй ĕç пуçарĕç

Апрелĕн 21-мĕшĕнче районти шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй пайне М.Г. Иванова гражданка шăнкăравланă. Ун патне килне пĕр ялтах пурăнакан арçын пырса кĕнĕ иккен, усал сăмахсемпе ятлаçма тытăннă. Кайран вара хĕрарăма мăйĕннчен ярса илсе пăвма пуçаннă, вĕлерессипе хăратнă.

Ку факт пирки тĕрĕслев ирттерме тивнĕ, пĕр ялти çынсенчен, тăванĕсенчен ыйтса пĕлнĕ. Фактсене тĕплĕ тĕрĕслесе мерăсем йышăнма материала Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайне ярса пачĕç.

Пуçтах арçын тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарасси паллă.

С. КОШКИН,
следстви пайĕн аслă следователĕ.